Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

41 (8002) № * Шӑмат кун, 2012 ҫулхи ҫӗртме (июнь) уйӑхӗн 2-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

**Раççейре**

## Июльтен эрех хакланать

Июлӗн 1-мӗшӗнчен шур эрех (водка) хакланать. Ҫур литр кӗленчи ун чухне 125 тенкӗрен йӳнӗ пулмӗ. Халӗ ӑна 98 тенкӗпе туянма пулать. Ҫапла вара шурӑ эрех вӑтамран 30 процент хакланать. «Ведомости» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх заводсем оптовиксене 99 тенкӗпе, кусем вара магазинсене 109 тенкӗпе сутма пуҫлаҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех алкоголь акцизӗсем те ӳсеҫҫӗ. Халӗ пӗр литршӑн 300 тенкӗ тӳлеҫҫӗ. 2013 ҫул тӗлне – 400 тенкӗне ҫити, 2014 ҫула – 500 тенкӗне, 2015 ҫула 600 тенкӗне ҫити ӳстерӗҫҫӗ.

**ИТАР–ТАСС.**

**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотипе наградӑланӑ

Нумай ҫул хушши тӑрӑшса вӑй хунӑшӑн тата ачасен хушма вӗрентӗвӗн ӗҫне тивӗҫлӗ тӳпе хывнӑшӑн район администрацийӗн 2012 ҫулхи майӑн 21-мӗшӗнчи 460 № йышӑнӑвӗпе ачасен хушма вӗрентӗвӗн «Ачасен Ф.С. Васильев ячӗллӗ Муркашри искусство шкулӗ» муниципаллӑ автономи вӗрентӳ учрежденийӗн фортепиано, музыка теорийӗ тата сольфеджио енӗпе музыка уйрӑмӗн преподавательне **Елена Васильевна НИКОЛАЕВӐНА** район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ.

**Фермӑра вӑй хуракансен конкурсӗнчен**

## Тӑрӑшни куҫ умӗнче



*Ял хуҫалӑхӗнчи йывӑрлӑхсенчен хӑрамасӑрах ҫӗр ӗҫченӗ пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсен экономика аталанӑвне шав малалла аталантарассишӗн тимлет. Кулленхи ӗҫре тӑтӑшах ҫӗннине алла илсе ырӑ опыта малалла ҫул уҫса пыраканӑн ӳсӗмӗсем те иккӗлентермеҫҫӗ.*

*Ҫу уйӑхӗн 29-мӗшӗнче "Передовик" хуҫалӑхӗн Ахманери сӗт ферминче пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенчи ӗнесене машинӑпа сӑвакан операторсемпе ӗнесене искусственнӑй майпа пӗтӗлентерекен техник-осеменаторсен конкурсӗ иртрӗ. Ӑмӑртӑва килнисем хӑйсен ӑсталӑхӗпе пултарулӑхне ушкӑна-ушкӑна пайланса кӑтартрӗҫ пулин те, кашни номинацирех ӑмӑрту ҫивӗч пулчӗ.*

*Тӗп дояркӑсем хушшинче «Ударник» хуҫалӑхран килнӗ Н. Семеновӑна* (сӑн ӳкерчӗкре варринче) *ҫитекенни пулмарӗ. Ҫӗнтерӳҫӗ оператор район чысне республикӑра хӳтӗлеме тивӗҫрӗ. Иккӗмӗш вырӑнта – «Путь Ильича» агрофирма доярки С. Иванова* (сылтӑмра). *Хӗрӳ кӗрешӳре пултарулӑхне пур енлӗн кӑтартса виҫҫӗмӗш вырӑна «Свобода» хуҫалӑхран килнӗ машинӑпа ӗне сӑвакан оператор М. Майорова* (сулахайра) *тивӗҫрӗ.*

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

**Республика парламентӗнче**

## Республика пуҫлӑхне халӑхпа суйламалла пулӗ

Чӑваш Республикин пиллӗкмӗш суйлаври Патшалӑх Канашӗн черетлӗ пиллӗкмӗш сессийӗн иккӗмӗш тапхӑрӗ иртнӗ. Кун йӗркине сессин пӗрремӗш пайӗнче пӗрремӗш вулавпа йышӑннӑ саккун проекчӗсене иккӗмӗш вулавра юридици вӑйӗ памалли ыйтусене кӗртнӗ.

Пӗрремӗш ыйту питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнине шута илсе «Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн суйлавӗ ҫинчен» саккун проектне халӑхпа сӳтсе явма, муниципалитет шайӗнчи депутатсен пухӑвӗсенче тишкерсе хак пама, сӗнӳсем пухма йышӑннӑ. Аса илтеретпӗр, асӑннӑ саккун проекчӗ регионсен пуҫлӑхӗсене малашне халӑх суйлассипе ҫыхӑннӑ.

Пӗрремӗшпе пӗрлех иккӗмӗш ыйтӑва та кун йӗркине кӗртме Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ сӗннӗ. Вӑл та – «Чӑваш Республикин вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен суйлавӗ ҫинчен» саккунне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен» – ҫӗршыври политика тытӑмӗн реформипе ҫыхӑннӑ. Сӑмах политика партийӗсене суйлава хутшӑннӑ чухне суйлавҫӑсем алӑ пуснине пухассинчен хӑтарасси пирки пырать. Ку тата ытти ыйтусене депутатсем иккӗмӗш вулавпа йышӑннӑ.

**Марафон**

## Ырӑ туни – пархатарлӑ ӗҫ

Хисеплӗ ентешсем! Чылай ҫул ӗнтӗ Раҫҫей ачапӑча фончӗн Чӑваш регион уйрӑмӗн пуҫарӑвӗпе «Ачасен ячӗпе, ачалӑхшӑн» ятпа республикӑра ыр кӑмӑллӑх марафонӗ ирттереҫҫӗ. Эпир пулӑшасса кӗтекен, хӑйсем ӗмӗтленнӗ пек пурӑнма пултарайман ачасене пулӑшас кӑмӑллӑ кашни ҫынах ырӑ ӗҫсен марафонӗн участникӗ пулма пултарать. Кусем вӗсем – ачаран инвалидсем, пурнӑҫ шӑпи хӑйсене ашшӗ-амӑшӗн хӳтлӗхӗсӗр, юратӑвӗсӗр тата ӑшшисӗр хӑварнисем, йывӑр лару-тӑрӑва лекнисем.

Ачасене ырӑ кӑмӑлпа пулӑшни вӑл чӑн-чӑн ҫынлӑх туйӑмӗн палӑрӑмӗ пулса тӑрать.

Район ҫыннисене пурне те, предприятисен, организацисен тата учрежденисен ӗҫ коллективӗсене, пӗчӗк тата вӑтам бизнес ертӳҫисене ыр кӑмӑллӑх марафонне хутшӑнма, ачасене пулӑшассин пархатарлӑ ӗҫне хӑвӑрӑн тӳпене хывма чӗнсе калатӑп.

Ырӑ тума пирӗн вӑй ҫук мар! Пӗрле пулсан эпир кирек епле ыйтӑва та татса пама пултарӑпӑр.

**Р. ТИМОФЕЕВ,**
**район администрацийӗн пуҫлӑхӗ.**

***Укҫа куҫармалли реквизитсем:***

Р/с 40738100752201600067 в Отделении № 8613 Сбербанка России в г. Чебоксары.
БИК 049706609, кор/с 30101810300000000609
ИНН 2128005408/ КПП 213001001
Получатель ЧРО ООБФ «Российский детский фонд».

## Вӑрҫӑ ветеранӗсене – укҫа тӳлевӗ

**Указ**

**Аслӑ Ҫӗнтерӳ тунӑранпа 67 ҫул ҫитнӗ май июнь уйӑхӗнчи пенсипе пӗрле Раҫҫей территорийӗнче ялан пурӑнакан Раҫҫей гражданӗсенчен ҫаксем пӗр хут паракан укҫа тӳлевӗсем илеҫ: Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ участникӗсем, вӗсен тӑлӑха юлнӑ мӑшӑрӗсем, концлагерь узникӗсем, блокадниксем, тыл ӗҫченӗсем. РФ Президенчӗн 2012 ҫулхи майӑн 7-мӗшӗнчи 595 № Указӗпе Чӑваш Республикинче пурӑнакан 36 пин ытла ҫынна асӑннӑ тӳлеве парӗҫ. Уйрӑм суммӑсене ҫак категорисене кӗрекенсем тивӗҫеҫҫӗ:**

5000 тенкӗ – Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ инваличӗсем;

5000 тенкӗ – Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ участникӗсем, вӑрҫӑ ҫулӗсенче призывпа 6 уйӑхран кая мар ҫарта пулнисем, Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ участникӗсем танлаштарнисем, Китайри, Ҫурҫӗр Корейӑри, Венгрири, Дамански утрав, Жаланшколь кӳллин районӗсенчи т. ыт. ҫапӑҫусене хутшӑннисем;

5000 тенкӗ – «Жителю блокадного Ленинграда» знакпа наградӑланисем;

5000 тенкӗ – Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче фашистсемпе вӗсен союзникӗсем йӗркеленӗ концлагерьсенче, гетто тата вӑйпа тытса усрамалли ытти вырӑнсенче пулнӑ ҫул ҫитмен узниксем;

5000 тенкӗ – Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра, Финляндипе, Японипе пынӑ вӑрҫӑра пуҫ хунӑ ҫар ҫыннисен тӑлӑха юлнӑ мӑшӑрӗсем;

5000 тенкӗ – Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑн вилнӗ инваличӗсен тӑлӑха юлнӑ мӑшӑрӗсем;

5000 тенкӗ – Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑн вилнӗ участникӗсен тӑлӑха юлнӑ мӑшӑрӗсем;

1000 тенкӗ – тыл ӗҫченӗсем:

– 1941 ҫулхи июнӗн 22-мӗшӗнчен тытӑнса 1945 ҫулхи майӑн 9-мӗшӗчченхи тапхӑрта тылра 6 уйӑхран кая мар ӗҫленисен (СССР территорине вӑхӑтлӑх оккупациленӗ вырӑнта ӗҫленӗ тапхӑр шута кӗмест);

– Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи хастар ӗҫшӗн СССР орденӗсемпе медалӗсене илме тивӗҫ пулнисем;

1000 тенкӗ – нацистсен концлагерӗсенче, гетто тата тӗрмисенче пулнӑ ҫул ҫитнӗ узниксем.

Муркаш районӗнче асӑннӑ тӳлеве 1454 ҫын илет. Енчен те гражданин темиҫе категорипе асӑннӑ тӳлеве тивӗҫет пулсан, ӑна пысӑкрах сумма илме май паракан пӗр категорипе кӗртеҫҫӗ.

Пӗр хут паракан укҫа тӳлевне Пенси фончӗнчи сведенисене кура уйӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ветерансенчен ытларахӑшӗн Пенси фондне пыма кирлӗ мар.

Анчах та вӑрҫӑра е вӑрҫӑ хыҫҫӑн вилнӗ хӗрарӑм салтаксен тӑлӑх мӑшӑрӗсене кун пек тӳлеве пуҫласа параҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӗсен хӑйсен статусне ҫирӗплетекен документа социаллӑ хӳтлӗх органӗнче илмелле, пенси илсе тӑракан вырӑнти Пенси фончӗн управленине заявленипе пымалла.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**Пенси фончӗн районти управленийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ.**

**Саламлатпӑр**



Хаклӑран та хаклӑ ҫыннӑмӑра, юратнӑ хӗрӗме – Атапай ялӗнче пурӑнакан **Алевтина Аполинарьевна БЫКОВӐНА** ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе саламлатпӑр. Аля, санӑн сывлӑху юман пек ҫирӗп, кун-ҫулу юхан шыв пек вӑрӑм пултӑр. Тавах сана ырӑ кӑмӑлушӑн. Май уйӑхӗнчи хӗвел ӑшши пек ӑшӑ та ырӑ кӑмӑл пултӑр санӑн пурнӑҫпе те. Санӑн ырӑ кӑмӑлупа ӗҫченлӗхӳ пирӗншӗн яланах ырӑ тӗслӗх пулӗ.

**Саламлаканӗсем: амӑшӗ, ывӑлӗ, хӗрӗпе кӗрӳшӗ, пиччӗшӗ, йӑмӑкӗсем, хунямӑшӗ, сывӑх тӑванӗсем, пускилсем, Степановсен, Николаевсен, Сивковсен, Паладьевсен ҫемйисем.**

Хаклӑ ҫыннӑмӑра, юратнӑ мӑшӑра, аттене, мӑсака, кукаҫие – Шаптак Муркаш ялӗнче пурӑнакан **Иван Михайлович МОРОЗОВА** 65 ҫулхи юбилей ячӗпе ӑшшӑн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр. Турри сана вӑйхал патӑр, чир-чӗртен упраса тӑтӑр. Эсӗ пурри пирӗншӗн – пысӑк телей, савӑнӑҫ. Пурӑн эсӗ ҫӗр ҫул савӑнса, пурнӑҫ телейне туйса, ачу-пӑчуна савса. Кун-ҫул сукмакӗпе тивӗҫлӗ утса, хӑвӑн ӑшшупа пире савӑнтарса. Эпир сана юрататпӑр, хисеплетпӗр, эсӗ пурришӗн савӑнатпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, хӗрӗ, ывӑлӗпе кинӗ, 4 мӑнукӗ, тӑванӗсем.**

Исетерккӗ ялӗнче пурӑнакан, чылай ҫул тӑван хуҫалӑхра вӑй хунӑ хаклӑран та хаклӑ тӑван аннене, хунямана, тӑхлачана, кукамая, асаннене, сывӑх тӑванӑмӑра – **Нина Родионовна ФЕОФАНОВӐНА** – 60 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн тухакан ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Юман пек ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул, канлӗ ватлӑх сунатпӑр, малашне те сана пурнӑҫра Турри вӑй-хӑват парсах тӑтӑр. Мӗн ӗмӗтленни-шутлани пурнӑҫа кӗрсе пытӑр ялан, хуйхӑ-суйхӑ ан пытӑр ҫума нихҫан. Анлӑ кӗреку тӑван кил-йыша хапӑл тутӑр куллен. Пире, ачусене, кун-ҫул йывӑрлӑхне пӑхмасӑр пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларнӑшӑн тата халӗ те пирӗншӗн чӑн-чӑн тӗрек пулнишӗн тав тӑватпӑр.

**Саламлаканӗсем: хӗрӗсемпе кӗрӳшӗсем, ывӑлӗсемпе кинӗсем, мӑнукӗсем, хӑтитӑхлачисем, тӑванӗсем.**



Юратнӑ аннене, асаннене, кукамая, аппана – Очӑкасси ялӗнче пурӑнакан **Алевтина Васильевна ГРИГОРЬЕВӐНА** 80 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Ӗҫрен те, ҫынна пулӑшасран та пӑрӑнмансскере, малашне те тулли пурнӑҫ, ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми телей, ӑнӑҫу сунатпӑр. Пурнӑҫ ҫулӗ такӑр та вӑрӑм пултӑр, чир-чӗр санран пӑрӑнса иртӗр. Ырӑ кӑмӑлушӑн, ӗҫченлӗхӳшӗн юрататпӑр сана.

**Саламлаканӗсем: хӗрӗсем, ывӑлӗсем, кинӗсем, кӗрӳшӗ, 9 мӑнукӗ, кӗҫӗн мӑнукӗ, тӑванӗсем.**

# «Эпир сире пулăшма хатĕр!»

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центрта

***Ĕç шыракан граждансене кирлĕ ĕç, ĕç паракансене кадрсем суйласа илме патшалăх пулăшăвĕ памалли тĕп мелсенчен пĕри вăл вакансисемпе вĕренӳ вырăнĕсен ярмăрки пулса тăрать.***

***Кун пек ярмăрккăсенче ĕç паракансемпе ĕç шыракансен пĕр-пĕрипе куçа-куçăн тĕл пулма, калаçса татăлма май пур.***

**Вакансисемпе вĕренӳ вырăнĕсен ярмăрккисен ТĔП ЗАДАЧИСЕМ çаксем:**

– çынсене ĕçе вырнаçтарассин майĕсем пирки тулли информаци парасси;

– ĕç шыракан граждансене ĕç паракансенчен чылайăшĕнпе тĕл пулма майсем туса панă май вĕсене ĕçе вырнаçма, ĕç паракансене вара кирлĕ кадрсем суйласа илме пулăшасси;

– район шайĕнчи предприятисемпе организацисене хăйсен штачĕсене комплектлама пулăшасси;

– граждансене ĕçе вырнаçтарассин, тĕрлĕ профессисене вĕренессин, çавăн пекех юридици ыйтăвĕсемпе те консультаци услугисем парасси.

Вакансисемпе вĕренӳ вырăнĕсен ярмăрккисене иртересси пирки кирлĕ информацие **ĕçпе тивĕçтерекен центрăн стенчĕ çинче, Интернет-ресурссенче вырнаçтарассĕ, массăллă информаци хатĕрĕсенче пичетлессĕ.**

**Хисеплĕ ĕç паракансем!**

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр сире вакансисемпе вĕренӳ вырăнĕсен ярмăрккине активлă хутшăнма ыйтать. **Унта хутшăннă май Эсир:**

– пушă ĕç вырăнĕсемпе должноçсене йышăнма кăмăл тăвакансемпе тĕл пулса калаçма пултаратăр;

– хăвăрăн требованисене кура кирлĕ кадрсене суйласа илейретĕр;

– дефицитлă вакансисем тĕлĕшпе кирлĕ работниксене конкурс иртерсе суйласа илме пултаратăр;

– хăвăра килĕшнĕ формăпа хăвăрăн предприяти презентацине иртерме пултаратăр;

– ĕçпе тивĕçтерессин законодательствин тĕрлĕ ыйтăвĕсемпе квалификациллĕ пулăшу илме пултаратăр;

– хăвăра интереслентерекен ыйтусемпе ĕçпе тивĕçтерекен центрпа çыхăну йĕркелеме пултаратăр.

**Сирĕн заявкăсемпе** асăннă ярмăрккăсене хăвăр предприятире те, çавăн пекех ĕçпе тивĕçтерекен центрта та иртterme май пур.

Вакансисен ярмăрккисене иртternин опычĕ çакна кăтартса парать. Ĕç шыракан граждансем хăйсене ĕç паракансемпе активлăрах тытаççĕ, ĕçе вырнаçассин ыйтăвĕсене сӳтсе яваççĕ, пулас ĕç вырăнĕ пирки туллинрех пĕлеççĕ.

Ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳçин хушăвĕпе **кăçалхи июнь уйăхĕнче вакансисен ятарлă ярмăрккине пенсие тухма вăхăт çитекен тата пенсири граждансем валли** йĕркелеме палăртнă.

Ярмăрккăсем иртерессин ыйтăвĕсемпе ĕçпе тивĕçтерекен центра пыма пултаратăр. Пирĕн адрес: Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 6-мĕш çурт (район администрацийĕн çурчĕ). **Телефонпа шăнкăравласа** та тулли информаци илме пулать: **62-1-66; 63-0-59.**

Çырав

## Тивĕçлисене чысларĕç

Çак кунсенче район администрацийĕнче савăнăçлă лару-тăрура 2010 çулхи çыравра активлăхпа палăрнă ĕçченсене чысларĕç. Сумлă тивĕçе пурнăçлама Патшалăх статистика федераллă службăн Чăваш Республикинчи территори органĕн ертӳçин çумĕ М. Дмитриев килсе çитрĕ. Раççей шайĕнчи ответлă ĕçе хутшăннă 41 çын "За заслуги в проведении Всероссийской переписи" медале, 25-шĕ статистика федераллă службин дипломне тивĕçрĕ. Çавăн пекех Тав çырăвĕсем илнисем те пулчĕç.

– Правительство комиссийĕ палăртнă тăрăх 2010 çулхи октябрĕн 14 – 25-мĕшĕсенчи çырав, пĕтĕмĕшле илсен, маларах палăртнă пекех, вăхăтлă та ăнăçлă иртрĕ. Çакăнта 5600 ĕçчен хутшăнчĕ, – терĕ М. Дмитриев çырав ĕçĕпе паллаштарса.

Çырав вĕçленнĕренпе вăхăчĕ самай иртрĕ, çак ĕçе пĕтĕмлетнĕ ĕнтĕ. Унăн пĕтĕмлетĕвĕ 2012 – 2013 çулсенче официаллă вун пĕр томра çырăнмалла.

Чăвашстатăн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн ертсе пыракан эксперт специалисчĕ З. Виноградова çырава хутшăннисене тăрăшса ĕçленĕшĕн тав турĕ, наградăсем илнĕ ятпа саламларĕ.

– Çăмăл мар ĕçре хăвăр ума лартнă тĕллеве вăхăтра тата туллин пурнăçларăр, кунта пирĕн район специалисчĕсем те ырăпа палăрчĕç. Çырав кăтартăвĕпе вара малашнехи чылай ĕç-хĕл çыхăннă, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев кунта пухăннисене тав туса саламланă май.

**Р. МАКАРОВА.**

Постановление

**Чувашская Республика**
**Администрация Моргаушского района**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**28.03.2012 г. №293 с. Моргауши**

**Об утверждении границ зон с особыми условиями использования территории (охранных зон) линейного объекта ОАО «АК «Транснефть» на территории Моргаушского района и установлении ограничений прав на земельные участки**

Рассмотрев заявление ФГУП «Госземкадастрсъемка» - ВИСХАГИ и представленные документы, на основании ст.56 Земельного кодекса РФ, ст. 10 Федерального закона от 24.07.2007 №221-ФЗ «О государственном кадастре недвижимости», постановления Правительства РФ от 09.06.1995 №578 «Об утверждении правил охраны линий и сооружений связи Российской Федерации» **ПОСТАНОВЛЯЮ:**

1. Утвердить границы охранной зоны существующего линейного объекта ОАО «АК «Транснефть» «Волоконно-оптическая линия передачи Мешиха-Альметьевск», площадью 103717 кв.м., расположенной: РФ, Чувашская Республика, Моргаушский район, согласно прилагаемой схемы.

2. Установить ограничения прав на земельные участки, входящие в границы охранных зон, в соответствии с постановлением Правительства РФ от 09.06.1995 №578 «Об утверждении правил охраны линий и сооружений связи Российской Федерации».

3. Опубликовать настоящее постановление в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Глава администрации района**
**Р.Н.ТИМОФЕЕВ.**

Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа – 67 çул

# Вăрçăра та, мирлĕ пурнăçра та

1945 çулхи майăн 9-мĕшĕнчи Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа 67 çул иртрĕ. Ирсĕр те хăрушă вăрçă. Миллионшар çын пурнăçне татрĕ вăл, кашни çемьене тертпе асап кӳчĕ. Унăн суранĕсем паян та пире аса илтерсех тăраççĕ.

Вăрçă участникĕсенчен пĕри – Алексей Александров – Тушкасси ялĕнчен. Алексей Александрович аслă лейтенант пулнă. 1942 çулхи январьтен тытăнса 1943 çулхи май уйăхĕччен Самарканд хулинче çыхăну çар училищинче вĕреннĕ. Çурçĕр Кавказ, 1-мĕш Белорусси фрончĕсенче радио взвод командирĕ, 1945 çулччен округ комендатурин управленийĕнче радиостанци пуçлăхĕ пулса çапăçнă. Орденсемпе медальсене сахал мар тивĕçнĕ.

Шел, паян пирĕн хушăмăрта çук ĕнтĕ вăл. Анчах эпир ăна манмастпăр.

А. Александров Çĕнтерӳ кунĕнче хăйĕн кăкăрĕ тулли наградисене çакатчĕ, ветерансемпе, тыл ĕçченĕсемпе тĕл пулатчĕ, урамра вĕсене çынсем саламлатчĕç... Çакăн пек тимлĕх темĕнрен те паха пулнă çав.

Унăн мăшăрĕ Мария Никитична пурăнать-ха. Çак кунсенче вăл хăйĕн 90 çулхи юбилейне паллă турĕ. Çитменнине тата ватă çыннăн юбилей кунĕ хăйĕн професси уявĕпе – Пĕтĕм Раççейри библиотекăсен кунĕпе – пĕр вăхăталла килчĕ. Вăрçă çулĕсенчи çамрăклăх вăхăчĕ унăн та çăмăл пулман. Фашизма хирĕç пынă вăрçă çулĕсенче çамрăксене Чул хулари авиаци çар заводне ĕçлеме янă. Çăмăл пулман, паллах, арçын вырăнĕнче станок умĕнче тăма, иртен тытăнса каçчен йывăр ĕçре вăй хума.



Вăрçă вĕçленсен кăна хăйĕн тăван енне – Етĕрне районĕнчи Хурамал ялне – таврăннă вăл. 1955 çулта ăна Советскинчи райплан председателĕ пулма шаннă. Кунта та шанăçа тӳрре кăларас тесе хăйĕнчен мĕн килнине пĕтĕмпех тунă. Дипломсемпе грамотăсене те сахал мар тивĕçнĕ. 1948 çулта Алексей Александровичпа çемье тĕвĕленĕ.

Пурăна киле мăшăрĕпе унăн тĕп килне – Тушкасси ялне – куçса килнĕ. Кунта ăна ун чухнехи Володарски ячĕпе хисепленекен колхоз (халĕ Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ) агрономĕ пулма çирĕплетнĕ. Кайран вара вĕсен хуçалăхĕ Суворов ячĕпе хисепленекен колхозпа пĕрлешсен Мария Никитична Тушкассинчи вулавăша ĕçлеме куçнă. 1972 çулта Анаткассинче Культура çурчĕ уçăлсан кунти библиотекăра ĕçлеме тытăннă. Мĕн пенсие тухичченех çакăнта тимленĕ.

Александровсен туслă мăшăрĕ 5 ача пăхса ӳстернĕ, пурне те пурнăç çулĕ çине тăма пулăшнă.

Нумаях пулмасть Мария Никитична 90 çул тултарнă май ăна саламлама йышлăн пухăнтăмăр. Вăрçăпа ĕç ветеранне ырă та ăшă сăмах калакансем хушшинче Анаткассинчи пуçламăш шкулта вĕренекенсем те, ял çыннисем те, пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçипе вырăнти ял тăрăхĕн пуçлăхĕ те, библиотекăпа культура ĕçченĕсем те пулчĕç, ватă çынна парнесем парса чысларĕç.

**Г. АНДРЕЕВА,**
**Анаткассинчи ялти библиотека ертӳçи.**

**Сăн ӳкерчĕкре: пĕрле пулнă çулсем – яланах асра вĕсем.**

Çĕнĕ юрă

## Ялан савар-и пĕр-пĕрне

**Сăвви Игорь МАЙКОВĂН**
**Музыки Виталий РОМАНОВĂН**



Çунат çапса тӳпене çĕкленчĕ
Тăри çепĕç юрă шăратса.
Чунри ăшă туйăмне пĕлтерчĕ
Савни çĕмĕрт çеçкине парса.

**Хушса юрламалли:**
Çĕмĕртсем ялан илемлĕ
Çеçке çурнă вăхăтра.
Чун савни, эп пит телейлĕ
Эс пурришĕн пурнăçра.

Çурхи кунĕ те паян хĕвеллĕ,
Эсĕ, тусăм, çумра пулнăран.
Утма çулĕ çуммăн утма меллĕ
Ăна иккĕн такăрлатнăран.

Ялан, чунăм, пĕр-пĕрне савар-и
Ăшăн шăкăл-шăкăл калаçса,
Çунат хушса тӳпене вĕçер-и
Тăри евĕр чунтан савăнса.

Шурча вăрçи пулнăранпа 170 çул çитнĕ май

# Юнлă юн кун

Шурча таврашĕнче пулса иртнĕ пăлхав историйĕ халĕ те кăсăклă. Ун пирки хаçатра пĕрре кăна мар пичетленĕ. Эпĕ халĕ ĕмĕр асра тытмалли хăш-пĕр самант çинче чарăнса тăрам. Чăваш вăрçи хыççăн Прусси баронĕ Август Гакстгаузен Раççее çул çӳреве килсен çаплам рах сăнлани пур.

…"Самай малтан выçлăх тапхăра сирес, ăна чăтса иртерес тĕллевпе чăваш халăхне çĕр улми ытларах туса илме хушу кăларнă. Йывăр вăхăт вара тăтăшах нушалантарнă. Çук пурнăç халăх кăмăлне хуçнă. Халăх кăмăлне пусаракан йывăрлăхсем, çĕнĕлĕхсем пĕр йĕрсĕр иртмен, каярах пысăк пăлхава куçнă – çакă 38 çын кун-çулĕпе çыхăннă", – тенĕ вăл.

"Çĕнĕ йĕрке" чăваш хресченĕсене 1838 – 1841 çулсем хушшинче çаварлăхламах тытăннă. Вĕсем тăтăшах пусмăрта пулнă тесен те йăнăш пулмĕ. Халăх пурнăçне çывăххăн сăнаса тăма çăмăл пултăр тесе уессене темиçе округа пайланă. Çĕр ĕçлекенсенчен сăптăракан кулянăн та ӳссех пынă. Ниçтан пĕр пус татса илме пултарайман ял çыннин ирĕксĕрех юлашки выльăхне пасара ăсатма тивнĕ. Мĕн чухлĕ ача вилнĕ пулĕ вăл вăхăтра? Çитменнине тата 1839, 1841 çулсенче чăвашра тырă пулман. "Çĕнĕ йĕркене" йышăнманнисем вара йышлансах пынă. Чăваш хресченĕсене ирĕксĕрлесе ĕçлеттерме хушма çĕр лаптăкĕсене вăя кĕртнĕ. Хресченсен хăйсен лашисемпе, сухапуçĕсемпе ĕçленĕ, анчах та вĕсене пĕр пĕрчĕ тырă та, ĕçленĕшĕн укçа та паман. Обществăлла ака-суха йĕркине вăя кĕртнине хирĕç пăлханаси 1841 çулхи çуркунне Шупашкар округĕнчи хресченсем хушшинче сисĕнме пуçланă. Çак çулхи ноябрь уйăхĕнче патшалăх пурлăхĕн министрĕ Киселев хăйĕн хушăвне пĕлтернĕ. "Обществăлла ака-суха йĕркине никамран ирĕк ыйтмасăрах пурнăçламалла", – тенĕ вăл.

Шурча вăрçине пула палăрнă çынсем пирки асăнса хăварам. Вĕсенчен пĕри – Хусанти çар кĕпĕрнатторĕ С. Шипов генерал-адъютант тата кавалер. 1842 çулта çур аки вăхăтĕнче чăваш çĕрĕнче пăлхав çĕкленме пултарасса кĕпĕрне хулинче Хусанта çеç мар, Питĕрте те малтанах сиссе-пĕлсе тăнă мĕн: çар кĕпĕрнатторĕпе патшалăх пурлăх палатин управляющине васкаса улăштарнă. Вĕсем – С. Шипов тата Н. Нефедов – иккĕшĕ те хушнă ĕçе пултарулла пурнăçлакан çынсем пулнă. Майăн 20-мĕшĕнче ирхине С. Шипов генерал Шурча ялне килнĕ. Хăй хушнă тăрăх çав кун ялта юн юхассине пĕлсе С. Шипов васкаса Хусана таврăннă. Çав кун вара шăпах юнлă юн кун пулнă. Ку ялта çав кун кирек мĕн пулса иртсен те вăл ĕçе эпĕ хутшăнман теме палăртнă иккен Хусанти пуçлăхсем умĕнче. Юн кунхи юнлă ĕçе пурнăçлама Шурча ялне Поль полковнике хăварать. Хаçатăн иртнĕ номерĕсенче ун пирки асăннăран чарăнса тăмăп. Каярах çар комиссийĕн пуçлăхне С. Шипов суд ведомствин чиновникне Машкин асессора лартать, пăлхава хутшăннисене çирĕп ответ тыттарма хушать. Лешсем вара çар кĕпĕрнатторĕ хытарса калаччине ытлашшипех тӳрре кăларма тăрăшаççĕ, айăплисене шпицрутенпа икшер те вичшер пин хут çаптармалла тăваççĕ. Питĕр çар сучĕн приговорĕсене С. Шипов чакарса тухса айăплисем умĕнче те ырă ятлă пулать.

**Архив материалĕсем тăрăх**
**Р. ИЛЛАРИОНОВА хатĕрленĕ.**

Техосмотр

## Хăрушсăрлăх – малти вырăнта

Кăçалхи майăн 30-мĕшĕнче район территорийĕнче шкул автобусĕсен техосмотрĕ иртрĕ. Хальхи вăхăтра район территорийĕнче 37 шкул. Ачасене шкула илсе çӳреме 17 автобус уйăрса панă. Техосмотр вăхăтĕнче икĕ автобусăнне юсавсăрлăхсем тупса палăртрăмăр. Çитменлĕхсене вырăнтах тӳрлетме май килчĕ пулин те, водительсем тĕлĕшпе административлă протокол çырма тиврĕ, должноçри çынсем тĕлĕшпе вара административлă производство пуçарас ыйту тăрать.

«Шкул автобусĕсен» техника шайне тĕрĕсленĕ хыççăн водительсемпе тата вĕрентӳ учрежденийĕсен директорĕсемпе профилактика калаçăвĕ ирттертĕмĕр, çул-йĕр правилисене çирĕп пăхăнмаллине, автобуссене яланах юсавлă тытмаллине, вĕсемпе тĕлевлĕ кăна усă курмаллине палăртрăмăр.

**С. ИВАНОВ,**
**çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн Муркаш районĕ тăрăх тĕп патшалăх инспекторĕ.**

Православи уявĕсем

# Троица уявĕ



Кăçал Троица уявĕ – Святой Сывлăш апостолсем çине аннă кун – июнĕн 3-мĕшĕнче пулать. Христос пĕлĕт çине çĕкленсен, вунă кунтан е вăл çуралнă алламĕш кунĕнче Троица праçникне ирттерĕç. Çак кун апостолсем Иерусалима таврăнсанах, Христоса ĕненекенсем, пĕр çĕре пуханса, Турра кĕл тунă. Çав вăхăтра пĕлĕт çинчен сасартăк кĕрлекен сасă илтĕннĕ. Апостолсем çине таса сывлăш аннă. Вĕсем çынсем пек пулса, ют чĕлхесемпе Турра мухтанă. Çакăн хыççăн Иерусалима тĕрлĕ халăх пуçтараннă. Пĕр апостол çўлти вырăна улăхса тăнă. Çакăнта пуханнă халăха сылăхсене каçарма, Христос ячĕпе тĕне кĕртме, таса сывлăш тивлетне илме чĕннĕ. Çав кун 3000 çын Христоса ĕненсе тĕне кĕнĕ. Çапла вара ăна ĕненекенсем куллен-кун йышланса пынă. Вĕсем пĕр шухăшлă пулнă, пĕр тăван пек пĕр-пĕрне пулăшса пурăннă.

Чăвашсем мĕн авалтанах, çур аки вĕçленсен, тĕрлĕ уяв ирттерĕç. Çуллахи пысăк уяв шутне Троица уявĕпе пĕр килекен Çулçă праçникĕ кĕрет. Ăна Çимĕк тесе те уявлаççĕ. Çак кун çынсем пĕтĕм ĕçе пăрахнă, тăван-хурăнташпа пĕрле пуханнă, хăш-пĕр çĕрте ярмăрккă ирттернĕ. Вăрмантан курăк татса килсе мунчара çапăннă. Чўречесем умне йывăç турачĕсемпе илемлетнĕ. Тăван çут çанталăк ырлăхĕпе пулакан уяв ешĕл çу кунĕсем çитнине çирĕплетнĕ. Троица умĕнхи кун вара, шăмат кун, ваттисене асăннă. Кăнтăр вăхăчĕ иртсен çăва çине кайнă.

Ку уява уйрăмах Оринин тăрăхĕнче анлăн паллă тăваççĕ, мĕншĕн тесен çак кун Оринин чиркĕвĕн хăйĕн престол уявĕ те. 1798 çулта хресченсен укçипе кирпĕчрен Орининта виçĕ престоллă чиркў туса лартнă. Варринчи престолне Святой Троица, сылтăм енчине Святой Михаил Архангел, сулахайрине Святой Порфирий ячĕсемпе тунă. Кăçал та Орининта Троицăна анлăн уявлама палăртнă. Тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕ, вăйă-кулă, ташă-юрă, конкурс хавхалантарĕ пуханнисене. Çавăн пекех суту-илў ĕçĕ те пулĕ вăрман уçланкинче. Килсе курăр, ўкĕнмĕр.

**Ю. УТКИНА,**
**Мулкачкассинчи библиотека пункчĕн библиотекарĕ.**

Шалти ĕçсен пайĕ пĕлтерет

# "Условник" операци

Районти шалти ĕçсен пайĕ оперативлă асăрхаттару уйăхлăхĕсемпе операцисем тăтăш ирттерет. Майăн 10 – 20-мĕшĕсенче "Условник" операцин иккĕмĕш тапхăрĕ иртрĕ. Çак тапхăрта сотрудниксем çул çитмен айăпланнă çамрăксем патĕнче пулчĕç, кацхи тата çĕрлехи рейдсем ирттерчĕç, условлă майпа айăпланнисем суд палăртнă явапплăха мĕнле пурнăçланине тишкерчĕç. Операци вăхăтĕнче пысăк çитменлĕхсем тĕл пулман.

Условлă майпа айăпланнисен хăйсен тўрĕ тивĕçĕсене çирĕп пăхăннă. Пăхăнманни вара хăш чухне ирĕкрен хăтарасси патне те çитерме пултарать. Çакăн пирки нихăçан та манмалла мар.

**В. АЛЕКСЕЕВ,**
**çул çитмен çамрăксем енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ.**

Пултарулăх




# Мускавран – çĕнтерўпе

Майăн 11 – 15-мĕшĕсенче Мускав хулинче ачасен тĕпчевпе краеведени ĕçĕсен пĕтĕм Раççейри "Отечество" конкурсĕн финалĕ пулчĕ. Кунта Раççейăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен йышлăн пуханнă, финала 150 вĕренекен тухнă. Чăваш Республикинчен конкурса хутшăнма виçĕ вĕренекен тивĕçнĕ, вĕсенчен иккĕшĕ пирĕн районтан.

"Экологи. Çут çанталăк пани" секцин жюри членĕсем Юнкă шкулĕнче 10-мĕш класра вĕренекен Мария Сытина çырнă "Кўлĕне пулăш" ĕçе пысăка хурса хакланă. Вăл "Орленока" кайма путевкăна тивĕçнĕ. Асăннă секцире вун çиччĕн пулнă.

Çавăн пекех конкурса Сыпай шкулĕнче 8-мĕш класра вĕренекен Ксения Дашкова та хутшăннă. Вăл "Тăван ен летопиçĕ" секцире иккĕмĕш вырăна тивĕçнĕ, конкурс дипломанчĕ пулса тăнă.

Маттур хĕр ачасем художествăлла пултарулăх конкурсĕнче те ăсталăх кăтартнă. Кунта вĕсем Вера Никонорова ертўçĕпе "Çурхи вăрманта" юрă шăрантарнă, дипломантсем пулса тăнă.

Тĕпчев ĕçĕсен ертўçисем И. Илларионова тата В. Дашков ача-пăча туризмĕпе краеведенин федераллă центрĕн Хисеп хучĕсене тивĕçнĕ.

**И. КИРШЕВА,**
**аслă вожатăй.**

Прокуратурăра

# Сипленессинчен пăрăннă

Район прокуратури халăхăн санитарипе эпидемиологи ăнăçлăхĕ тĕлĕшĕнчи саккунĕ епле пурнăçланнине тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслев ирттернĕ май уçă формăллă туберкулезпа чирлĕ виçĕ çын сипленессинчен пăраннине тупса палăртнă. Çапла вара вĕсене ирĕксĕрлесе сиплев курсĕ ирттерме Шупашкар хулин Мускав район судне иск заявленийĕ тăратнă.

**А. ЧЕРНОВ,**
**район прокурорĕн пулăшуçи.**

Следстви пайĕнче

# Вăрă çулĕ кĕске

Турай ял тăрăхĕнчи çул çитмен пĕр çамрăк тăр кăнтăрлах вăрлас шухăш тытнă. Хăй маларах палăртнă хуçалăхри пўрте кантăк витĕр кĕнĕ. Çамрăк çын унтан тăватă пин тенкĕ укçа вăрласа тухнă. Преступлени тунине çирĕплетме кунта факт çителĕклĕ. Çапла вара çул çитмен çамрăк РФ УК 158 статйинче пăхнă йĕркене сĕмсĕррĕн пăснă.

**И. ФЕДОТОВ,**
**аслă следователь.**

Предпринимательсен кунĕнчен

# Ĕçре те, спортра та туслă

Çу уйăхĕн 26-мĕшĕнче, Раççейри предпринимательсен кунĕнче, Муркашри ĕçлĕ çынсем те çумăрлă çанталăкпа кĕрешсе хăйсен уявне анлăн паллă турĕç. «Малашлăха пăхса ĕçлекен çыншăн çанталăк чăрмав мар. Чăн-чăн предпринимателĕн кирек епле условисенче те пайта илме пĕлмелле. Муркашсем çапла тума пултараççĕ», – палăртрĕ хăйĕн сăмахĕнче район администрацийĕн сумĕнчи пĕчĕк предпринимательство канашĕн председателĕ В. Семенов.

Предпринимательсен кунĕ кăçал районта анлă иртрĕ. Çакăнта кашни пуçарулла çыннăн тўпи пулчĕ. Ĕçĕсене пĕчĕк тата вăтам бизнес аталанăвне хывакансем малтанах район центрĕнчи стадионта мини-футболла выляса ăмăртрĕç. Вăйăсене предпринимательсен 11 команди хутшăнни тата вĕсем хушшинче кўршĕ районсен командисем пулни те Муркашра предпринимательсен кунне уявлас йĕрке никĕсленнине çирĕплетет. Кунта Шетмĕпуçĕнчи В. Павлов индивидуаллă предпринимателĕн команди палăрчĕ.

Рынок хутшăнăвĕнчи çаврăнăçуллă ĕçченсем çумăрлă çанталăка пăхмасăрах каç енне уяв хăватне ўстерчĕç. Спорт мероприятийĕсем хыççăн Муркашри Спорт çуртĕнче предпринимательсен выставки алăкĕсене уçрĕ. Кунта Т. Малова ĕçченĕн килти хушма хуçалăхра ĕрчетекен кайăк-кĕшĕкĕпе тата чĕр чунĕсемпе, О. Федоровăн йывăç лăпăран авса тунă сĕтел-пуканпа, «Ольга» парикмахерскийĕн тата Д. Колесниковăн туй салонĕн услугисемпе, Э. Терентьевăн автомашинисемпе, А. Портновăн кану тата курорт бизнесĕн проекчĕпе, М. Васильевăн килте хатĕрленĕ супăнĕпе, Е. Яковлевăн ландшафт дизайнĕпе, «Орифлейм» сĕнĕвĕсемпе, «Сундырь-Хлеб» продукцийĕпе, «Минутка» кафе пулăшăвĕпе, Г. Мириеван пахча çимĕçĕпе паллашни те выставкăна пынă кашни çынрах ырă туйăм çуратрĕ. Апла пулсан Муркашра та пĕчĕк предпринимательство аталанать.

Уява хутшăннисем кашниех Москакассинче «Заря» ООО ертсе пыракан П. Терентьев пирки ырă сăмахсем каларĕç. Унăн тĕслĕхĕнче çынна пулăшаканăн алли типмест каларăш малта тăнине никам та пытармарĕ. Çакна хăйсен тав сăмахĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В. Ананьев, районти социаллă хўтлĕх пайĕн ертўçи Н. Петрова, Муркашри кĕлĕ çуртĕн настоятелĕ Федор атте, ФСК директорĕ А. Куликов, районти бокс федерацийĕн ертўçи С. Черкашин та палăртрĕç.

**А. БЕЛОВ.**

Объявление

**Проводится конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

Администрация Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики со 2 июня 2012 года.

Кадровый резерв формируется с учетом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненная и подписанная анкета по установленной форме с приложением фотографии;

в) копия паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытиИ на конкурс);

г) копии документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;

копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) заключение медицинского учреждения об отсутствии заболевания, препятствующего поступлению на муниципальную службу;

е) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика - от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

ж) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

з) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справки, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления по 1 июля 2012 года включительно по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: д. Шатьмапоси, ул. Первомайская, д.20/3.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 68-5-36, факс 68-6-04, эл. почта mrgshatm_pos@cbx.ru официальный сайт администрации Шатьмапосинского сельского поселения.

Çул-йĕр

# Инкексенче икĕ çын вилнĕ

Майăн 18-мĕшĕнче Мускав – Ĕпхў автоçул çинче тăватă сехет çурăра инкек пулнă. Тутар Республикинчен килекен водитель руль умĕнче тĕлĕрсе кайнă, ыйхă тĕлĕшĕн " ГАЗЕЛЬ" маркăллă автомашинăна хирĕçле çул çине тытнă. Ун еннелле килекен водитель вара инкекрен çăлăнас тĕллевпе тепĕр йĕр çине тухнă. Апла пулин те тĕлĕрнĕ водитель инкекрен хăтăлайман, тепĕр автомашинăна пассажир ларнă енĕпе çапăннă. Аварире пĕр пассажир вилет. Инкеке лекнĕ икĕ çынна больницăна илсе çитерме тивет. Халĕ ку тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарас ыйту тăрать.

* * *

Çўлерех асăннă автоçул çинче тепĕр инкек майăн 24-мĕшĕнче çĕрле пулнă. Етĕрне каччи, доверенноçпа усă кураканскер, ВАЗ-2106-1 машинăпа çула тухнă. Мускав еннелле кайнă чухне çул-йĕр правилине пăсса хирĕç килекен йĕр çине тухнă, МАЗ–437041-262 транспортпа çапăннă. Çапла вара пĕрремĕш автомашина водителĕ инкек вырăнĕнче вилнĕ, суранланнă икĕ пассажира Етĕрне больницине илсе çитерме тивнĕ.

**С. ИВАНОВ,**
**патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

Спорт

# Иккĕмĕш вырăнта

Район спортсменĕсем пире тăтăшах хăйсен çитĕнĕвĕсемпе савăнтараççĕ. Акă майăн 12-мĕшĕнче акватон (чупасси, ишесси) енĕпе иртнĕ Чăваш Республикин чемпионачĕнче те Муркаш ячĕ çўлти шайра пулчĕ. Ăмăртура Д. Данилов республика чемпионĕ ята, Е. Мясникова иккĕмĕш вырăна тивĕçрĕ.

# Шкул ачисен спартакиадинче

Çĕрпўре майăн 23-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн парнисене çĕнсе илессишĕн шкул ачисен спартакиади иртрĕ. Унта республикăри вун ултă команда тĕрлĕ енĕпе вăй виçрĕ. Ытти çулхипе танлаштарсан кăçал ку ăмăртăвăн хăйне майлă уйрăмлăхĕ те пулчĕ. Маларах хуласен тата районсен командисем уйрăм ушкăнсенче тупăшнă пулсан, халĕ пурте пĕрле вăй виçрĕç. Çавна май ăмăрту самай кăсăкланчĕ. Апла пулин те Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле хулисен командисен хыççăн Муркаш команди виççĕмĕш пулчĕ. Уйрăм ăмăртура И. Григорьева та виççĕмĕш вырăна тухрĕ. Çавăн пекех эстафета тупăшăвĕнче Муркашсем – виççĕмĕшсем.

Ăмăртăва хутшăннисене ятран палăртса хăварас килет. К. Филиппова (тренерĕ В. Леонтьев), И. Григорьева, Е. Мясникова, К. Никонова, Д. Данилов, Е. Григорьев, А. Мастеров район чысне ăнăçлă хўтĕлерĕç.

Çавăн пекех республика шайĕнчи ăмăртăва хутшăнма пулăшнăшăн Муркашри рынок ертўçине Е. Субботина пурин ячĕпе те пысăк тав сăмахĕ каласа ырлăхсынлăх сунас килет.

**В. ГЕРАСИМОВ,**
**тренер.**

# Телепрограмма

с 4 по 10 июня 2012 года

## ПОНЕДЕЛЬНИК, 04.06

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 «Контрольная закупка»
9.50 «Жить здорово!»
10.55 «Модный приговор»
12.25 Т/с «ЖЕНСКИЙ ДОКТОР»
13.20 «Смак»
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить»
15.15 Т/с «ДЕВИЧЬЯ ОХОТА»
16.20 «Хочу знать»
17.00 «Жди меня»
18.25 «Между нами, девочками»
19.00 «Давай поженимся!»
20.00 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.30 «Побег»
22.30 «Первый класс»
23.30 «Вечерний Ургант»
0.00 «Познер»
1.20 «Непутевые заметки»
1.40, 3.05 Х/ф «БИЛОКСИ БЛЮЗ»
3.45 Т/с «В ПАУТИНЕ ЗАКОНА»

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «С новым домом!»
9.45 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 16.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ»
13.00 «Люблю, не могу!»
14.50 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ»
15.45 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 Т/с «СВАТЫ»
18.50 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «МОЯ БОЛЬШАЯ СЕМЬЯ»
22.55 Т/ф «На дне знаний-2»
0.05 «Землетрясение. Кто следующий?»
1.05 Вести +
1.25 «Профилактика»
2.35 Т/ф «ПИСЬМА С ИВОДЗИМЫ»

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чăваш ен
20.30-20.50 Вести-Чувашия

**На канале «Россия-2»**

11.55-12.25 Вести-Спорт-Чувашия

### КУЛЬТУРА

7.00 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.15, 1.40 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10 Д/ф «Гончарный круг»
12.20 «Линия жизни»
13.15 Д/с «История произведений искусства». «Гладиатор»
13.40 Г. Мамлин. Телеспектакль «ИЮНЬ. МОСКВА. ЧЕРТАНОВО»
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 М/ф «Беги, ручеек». «Алим и его ослик»
16.20 Д/с «Рассказы о природе»
17.15 Д/с «Невесомая жизнь». «Диалог с Диснеем»
17.40 «Звезды скрипичного искусства». Вадим Репин
18.40 Д/ф «Тихо Браге»
18.45 «Музей во времени и пространстве...»
19.45 Главная роль
20.05 «Сати. Нескучная классика...»
20.45 «Полиглот»
21.30 Д/ф «Потерянный город Орхана Памука»
22.15 «Тем временем»
23.00 «Атланты. В поисках истины». «Климат и ход истории».
23.50 Спектакль «БЕРЕГ УТОПИИ»
1.00 «Кинескоп»
2.30 Д/с «История произведений искусства». «Мастерская художника»

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.30 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ»
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
10.55 «До суда»
12.00 Суд присяжных
13.25 Т/с «ПАУТИНА»
16.25 «Прокурорская проверка»
17.40 «Говорим и показываем»
19.30 Т/с «НОВАЯ ЖИЗНЬ СЫЩИКА ГУРОВА. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
21.25 Т/с «СТРАНСТВИЯ СИНДБАДА»
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 Честный понедельник
0.25 «Школа злословия». Михаил Гаехо
1.10 Главная дорога
1.45 Центр помощи «Анастасия»
2.35 «В зоне особого риска»
3.05 Т/с «РУБЛЕВКА. LIVE»
5.00 Т/с «ЗНАКИ СУДЬБЫ»

## ВТОРНИК, 05.06

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 «Контрольная закупка»
9.50 «Жить здорово!»
10.55 «Модный приговор»
12.25 Т/с «ЖЕНСКИЙ ДОКТОР»
13.20 «Смак»
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить»
15.15 Т/с «ДЕВИЧЬЯ ОХОТА»
16.20 «Хочу знать»
17.00 «Жди меня»
18.25 «Между нами, девочками»
19.00 «Давай поженимся!»
20.00 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.30 «Побег»
22.30 Х/ф «НИКИТА ХРУЩЕВ. ГОЛОС ИЗ ПРОШЛОГО»
23.30 «Вечерний Ургант»
0.20 «Гражданин Гордон»
1.20 Х/ф «ЗАБЫТОЕ»
3.05 Х/ф «СЕДЬМОЙ»

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «С новым домом!»
9.45 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 16.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ»
13.00 «Люблю, не могу!»
14.50 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ»
15.45 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 Т/с «СВАТЫ»
18.50 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «МОЯ БОЛЬШАЯ СЕМЬЯ»
22.55 Специальный корреспондент
23.55 К 100-летию Пушкинского музея. «XXI век»
0.55 Вести +
1.15 «Профилактика»
2.25 «Честный детектив»
2.55 М/ф «Крутые девчонки»
4.15 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК»

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Ирхи тĕпел («Утренний гость» на чувашском языке)
9.30-9.45 Актуальное интервью
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чăваш ен
20.30-20.50 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.15, 1.55 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10, 20.45 «Полиглот»
12.55 Д/с «Завоеватели». «Царь Давид»
13.40 «Пятое измерение»
14.10 Х/ф «ДУБРОВСКИЙ»
15.20, 18.25 Д/ф «Мировые сокровища культуры»
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 М/ф «Вовка в тридевятом царстве». «Волк и семеро козлят»
16.20 Д/с «Рассказы о природе»
17.15 Д/с «Невесомая жизнь». «Герой своего мультвремени»
17.40 «Звезды скрипичного искусства»
18.45 «Музей во времени и пространстве...»
19.45 Главная роль
20.05 Власть факта. «Человек и море».
21.30 «Больше, чем любовь»
22.15 «Игра в бисер»
23.00 «Атланты. В поисках истины». «Коллайдер - почему его боятся?»
23.50 Спектакль «БЕРЕГ УТОПИИ»
1.15 Д/ф «Венеция. На плаву»
2.50 Д/ф «Пьер Симон Лаплас»

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.30 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ»
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Внимание, розыск!»
10.55 «До суда»
12.00 Суд присяжных
13.25 Т/с «ПАУТИНА»
16.25 «Прокурорская проверка»
17.40 «Говорим и показываем»
19.30 Т/с «НОВАЯ ЖИЗНЬ СЫЩИКА ГУРОВА. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
21.25 Т/с «СТРАНСТВИЯ СИНДБАДА»
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 Т/с «ГЛУХАРЬ»
1.30 Квартирный вопрос
2.35 Чудо-люди
3.05 Т/с «РУБЛЕВКА. LIVE»
5.00 Т/с «ЗНАКИ СУДЬБЫ»

## СРЕДА, 06.06

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 «Контрольная закупка»
9.50 «Жить здорово!»
10.55 «Модный приговор»
12.25 Т/с «ЖЕНСКИЙ ДОКТОР»
13.20 «Смак»
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить»
15.15 Т/с «ДЕВИЧЬЯ ОХОТА»
16.20, 4.00 «Хочу знать»
17.00 «Жди меня»
18.25 «Между нами, девочками»
19.00 «Давай поженимся!»
20.00 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.30 «Побег»
22.30 Среда обитания. «Туристы и аферисты»
23.30 «Вечерний Ургант»
0.20 «В контексте»
1.15, 3.05 Х/ф «БАГСИ»

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «С новым домом!»
9.45 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 16.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ»
13.00 «Люблю, не могу!»
14.50 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ТАЕЖНАЯ ЛЮБОВЬ»
15.45 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 Т/с «СВАТЫ»
18.50 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «МОЯ БОЛЬШАЯ СЕМЬЯ»
22.55 «Исторический процесс»
0.30 Вести +
0.50 «Профилактика»
2.00 Т/ф «ЗУБАСТИКИ 2: ОСНОВНОЕ БЛЮДО»
3.40 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК»

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чăваш ен
20.30-20.50 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.15, 1.55 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10, 20.45 «Полиглот»
12.55 Д/с «Завоеватели». «Вильгельм Завоеватель»
13.40 Красуйся, град Петров!
14.10 Х/ф «МЕТЕЛЬ»
15.25, 18.25, 1.40 Д/ф «Мировые сокровища культуры»
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 М/ф «Наргис». «Дереза»
16.20 Д/с «Рассказы о природе»
17.15 Д/с «Невесомая жизнь». «Из чего сделана душа»
17.40 «Звезды скрипичного искусства». Рено Капюсон
18.45 «Музей во времени и пространстве...»
19.45 Главная роль
20.05 «Абсолютный слух»
21.30 Д/ф «Навеки чужие»
22.15 Магия кино
23.00 «Атланты. В поисках истины». «Нанотехнологии - процветание или гибель?»
23.50 Спектакль «БЕРЕГ УТОПИИ»
1.00 Д/ф «Музыка «на ребрах»
2.50 Д/ф «Тамерлан»

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.30 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ»
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Внимание, розыск!»
10.55 «До суда»
12.00 Суд присяжных
13.25 Т/с «ПАУТИНА»
16.25 «Прокурорская проверка»
17.40 «Говорим и показываем»
19.30 Т/с «НОВАЯ ЖИЗНЬ СЫЩИКА ГУРОВА. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
21.25 Т/с «СТРАНСТВИЯ СИНДБАДА»
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 Т/с «ГЛУХАРЬ»
1.30 Дачный ответ
2.35 Чудо-люди
3.05 Т/с «РУБЛЕВКА. LIVE»
5.00 Т/с «ЗНАКИ СУДЬБЫ»

## ЧЕТВЕРГ, 07.06

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 «Контрольная закупка»
9.50 «Жить здорово!»
10.55 «Модный приговор»
12.25 Т/с «ЖЕНСКИЙ ДОКТОР»
13.20 «Смак»
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить»
15.15 Т/с «ДЕВИЧЬЯ ОХОТА»
16.20, 4.10 «Хочу знать»
17.00 «Жди меня»
18.25 «Между нами, девочками»
